К 84.09(=Чув)
Ю41
Ч-43789



Анатолий
ЮМАН

# ВАТӐ ЮМАН ШУХӐШӖ

Сонетсем • Тӑваттӑмӗш ҫаврӑм

Национальная библиотека ЧР
4-043789

Обязат. экз.
К 84.09(=Чув)
Ю41

**Анатолий ЮМАН**

# Ватӑ Юман шухӑшĕ

## Сонетсем

### Тӑваттӑмĕш ҫаврӑм

Шупашкар,
2010

К 84.09(=Чув)6-531.23

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6-531.23-444.3
Ю 41

**Юман А.**
**Ватă Юман шухăшĕ.** – Шупашкар, 2010. – 56 с.

Хăйĕн сонетсен çĕнĕ кĕнекинче (тетралоги) А.Юман этемĕн кашни ăруне канăç паман ĕмĕрхи темăсене хускатать. «Ватă Юман шухăшĕ» ятлăскер, вăл К.Ивановăн «Ватă вăрман шухăшне» аса илтерет. Ахальтен мар кĕнеке эпилогĕ те çав сăвă йĕркисенченех тăрать: «Çамрăк вăхăт, ыр вăхăт, Ăçта эсĕ çухалтăн?». Вĕсем ярăмăн тĕп шухăшне туллин те уçăмлăн палăртаççĕ. Унта – лирикăлла герой иртсе кайнă çамрăклăх, ырăпа усал, пурнăçпа вилĕм, çав вăхăтрах чун çамрăклăхĕ, ăрусен çыхăнăвĕ, çĕнĕ самана çинчен шухăша кайнисем.

В своей новой книге сонетов (тетралогия) А.Юман поднимает вечную тему быстротечности жизни. Это цикл под названием «Думы старого Юмана» перекликается с известным отрывком из незавершенной легенды классика чувашской литературы К.Иванова «Думы старого леса». Недаром и эпилог состоит из философских фраз из этого отрывка: «Где ты, время золотое? Где вы, годы молодые?», что вполне отражает замысел автора. Это – раздумья о прошедшей молодости лирического героя, его размышление о добре и зла, о жизни и смерти, вечной душевной молодости избранных, о связи поколений – в целом, это – поэзия о времени и о себе.

На обложке портрет автора. Работа художника *Николая Кондрашкина.*

Ч-43789

© А. Юман, 2010
© Составление – редакция газеты “Канаш”(В.А. Ефимова), 2010

Национальная библиотека
Ч
Респ...

# АВТОБИОГРАФИЯ

Я, Ермилов (Юман) Анатолий Федорович, родился 28 октября 1932 года в деревне Средние Алгаши Цильнинского района Ульяновской области в семье учителей.

После окончания начальной школы в 1943 году продолжал учебу в Староалгашинской семилетней школе, затем в 1952 году окончил Среднетимерсянскую среднюю школу. В том же году был приглашен на работу в редакцию чувашской районной газеты «Пĕрлешӳллĕ ĕç» («Коллективный труд»). С тех пор до 1989 года, на протяжении 38 лет, работал в коллективе редакции этой районной газеты в селе Большое Нагаткино. С 1963 года работал заместителем редактора по дубляжу.

С 1989 года, со дня основания областной чувашской газеты «Канаш» работал литературным сотрудником в качестве заместителя редактора. С 1994 года на пенсии.

За эти годы я выполнял различные поручения. Был одним из организаторов чувашского национального движения в Ульяновской области, его «летописец». Оказываю посильную помощь начинающим писателям и поэтам. Под моей редакцией вышел в свет первый коллективный сборник произведений членов литобъединения «Зарница» при редакции областной чувашской газеты «Канаш» под названием «Свет зарницы».

Мною написаны и издано более 30 названий книг. Среди них «Колыбель счастья» – поэма, «Говорит Симбирский камень» – поэмы, «Избранное» (стихи и поэмы, роман в стихах «Водоворот»), «Отметины на сердце» – стихи и поэмы, «Рукопожатие» – стихи, поэма, «Синий след» – избранные стихи и поэма, «Крылья» – стихи, поэма, «Сонеты» в трёх книгах и др. Являюсь членом Союза писателей РФ и членом Союза журналистов России. Награжден медалями «За доблестный труд. В ознаменование 100-летия со дня рождения В.И. Ленина», «Ветеран труда». Чувашский народный академик, член Совета старейшин Чувашского Национального Конгресса. Заслуженный работник культуры России. Почетный гражданин Цильнинского района. Лауреат премии имени Марии Ульяновой – Ульяновской областной журналистской организации (1982 г.) и литературной премии профессиональных писателей Чувашии имени Педэра Хузангая.

В настоящее время продолжаю работать над новыми поэтическими произведениями. Работаю и в прозе (повесть о детстве, очерки, литературные воспоминания, эссе).

20 февраля 2009 года *А. Ермилов-Юман*

*Çамрăк вăхăт, ыр вăхăт,*
*Ăçта эсĕ çухалтăн?*
(К.Иванов.)

1.

Чӳк уйăхĕн вун виççĕмĕшĕнче
Хура кĕрпе тĕнчене килнĕ эсĕ.
Çулпа вăтам хĕрарăм шутĕнче,
Сыхланнă санăра çаплах хĕр сăнĕ.

Вун виççĕмĕш числа хисепре мар,
Ăна авал шуйттан иленнĕ имĕш.
Анчах вăл пур чухне мĕскер тăвар?
Ху шăпупа эс çырлахмашкăн тивĕç.

Шăпа сана та кӳнĕ хура-шур.
Нушасăр çын пач çуккине пĕлетпĕр,
Тивĕçлине çавах çĕнсе илетпĕр,
Апла пулсан тĕшмĕш çине эс сур!

Чӳк уйăхĕн вун виççĕмĕшĕнче
Эс пуррипе илемлĕ çут тĕнче.
13.11.08.

2.

Эй, Вăхăт, Вăхăт! Мĕн тăватăн эс?
Лара-тăра пĕлми ăçта васкатăн?
Сан хыççăн ман ăçта кайса кĕрес?
Тин çеç ачаччĕ, яшчĕ, халĕ — ватă.

Этем кун-çулĕн пур-ха, пур чикки.
Анчах пурте каçаймăпăр ун урлă —
Çакна пĕлсе тăма питех те хурлă...
Питех сайра Кĕлпук мучи пекки.

Мĕн чуль хут хăртмарăм хамăн ĕмĕрте,
Анчах алçырусем кама халь кирлĕ?..
Хама та тек вĕсем шел мар пĕртте —
Каланккара çунаççĕ каçлă-ирлĕ.

Эп — Гоголь мар, танлаштармашкăн çылăх —
Анчах мана ун шухăшĕсем çывăх.
17.11.08.

3.

Пĕрре кăна кĕрейрĕн те киле
Чун-чĕрене эс тарăн йĕр хăвартăн.
Тин саврăм пурнăçа ĕлĕкхилле.
Йăлл! илчĕ çутăлса чунри кăвар та.

Анчах кĕтни пымарĕ вăраха,
Шел, каялла ăсантăн питĕ хăвăрт
Сĕм тĕттĕме чăмса çухалтăн йăпăрт, –
Мана каллех хăвартăн хăраха.

Ăсатнă-ăсатман эп тунсăхра.
Чун ыратать сана татах курасшăн.
Сăну çаплах куç умĕнче, асра,
Ларса пуплес килет ман ăшшăн-ăшшăн

Ху кайнă хыççăн та. Тĕлĕнмелле:
Вăхăтлăха çеç тухрăн темелле.
16.11.08.

4.

Кун-çул чикки инçех юлман-и, тен, –
Çавallă Карчăк, ан васка, ан савăн!
Пуласчĕ вăрăм ĕмĕрлĕ этем, –
Шăпа пӳрни вĕçне çитмен-ха манăн.

Çӳçе тăм тиврĕ тейĕпĕр... Пулин!
Ман чунăм пур. Çаплах хитре вăл, çамрăк.
Кăварĕ ун сӳнсе пулман-ха кăмрăк,
Вăл çĕнĕрен амаланать-ха тин.

Ăна сӳнме памасть ман юрату,
Пур тĕнчере пирĕшти пек хĕрарăм.
Çук, арăм мар, апла чĕнме хăймарăм,
Вăл – чун кĕтни, ыр туйăм, йăпату.

Çавallă Карчăк! Ман пурнас килет, –
«Леш тĕнчене»* ан хатĕрле «билет».
19.1108.

---

* Кунта Вилĕм тесе ăнланмалла.

5.

Эс манăн арăм мар. Питех те шел.
Бальзак çулĕсенчи хитре хĕрарăм.
Сăну-питŭ çырла пек мĕнешкел!
Чунупала та хитрине сăнарăм.

Ачу-пăчу та çитĕннĕ тахçан.
Çут тĕнчере мăшру та сывă санăн.
Ютри çав арçынна епле ăмсанмăн, –
Санпа тĕл пулкалатпăр ăнсăртран.

Анчах кунта пачах ман айăп çук,
Сана курнипеле те савăнатăп,
Куçăмпала курса çеç ачашлатăп
Урампала иртсе тĕл пулнă чух.

Сана курман чухне эп – мĕскĕн, чирлĕ,
Çавăнпала мана куллен эс кирлĕ.
20.11.08.

6.

Пĕчченлĕх ман инкек. Пĕчченлĕх – чир.
Çакна пĕччен юлсан кăна пĕлетĕн.
Çак инкекрен пач хŭтлĕхсĕр эпир,
Кил-йыш тулли ача çитĕнтерсен те.

Кĕçех çунат сараççĕ ачасем,
Çурту сан пушанса юлать пит хăвăрт.
Чун хурланать кăна аса илсен,
Сан ватлăху кĕрхи кун евĕр ăмăр.

Калаççĕ: калаçма та кирлĕ çын.
Чĕре ăшши те кирлĕ каçлă-ирлĕ.
Çавăнпала мана куллен эс кирлĕ, –
Мучи çулне çитсен те, эп – арçын.

Анçынпала хĕрарăм ăшшинче
Тĕреклĕн тытăнса тăрать тĕнче.
20.11.08.

7.

Сана кĕтетĕп эп пĕр кун, ик кун,
Кĕтетĕп эп сана эрне те уйăх.
Кĕтмелли çын пур чух – ман çамрăк чун,
Хăямата кайса кĕрет чĕр хуйăх.

Пач çăмăл мар кĕтме, тăванăм, çук,
Пĕр кун та туйăнать сана çулталăк.
Эс кайрăн та çухалтăн. Манăн алăк
Пĕрре те хупăнмарĕ эс çук чух.

Ăçта утса çӳретĕн-ши, кампа?
Ку чух тĕнче пĕрре те тикĕс мар та,
Пĕрре те лăпкă мар чун çавăнпа,
Инкек-синкек тĕл пуласран хăратăп.

Сыв чух çулталăкшар кĕтме пулать,
Вилсен – суран ĕмĕрлĕхе юлать.
29.11.08.

8.

Пире вĕрен çыхать мĕн ачаран,
Тăван кĕтес, кил-йыш, ял-йыш вĕренĕ.
Аттепеле анне кăвапаран
Çыхăннăран эс вĕсемпе çӳренĕ.

Кайран – тантăшусем пур санăн, тусусем,
Тăван çĕре ярать çемье тымарĕ.
Ӳсеççĕ, çитĕнеççĕ ачусем, –
Эс çыхăннă. Каллех ку вĕрен мар-и?

Аван-и е начар-и – тĕрлĕрен
Килсе тухать ача-пăча телейĕ.
Епле пулсассăн та вĕренрен
Çаплах татăлаймастăн эсĕ тейĕп.

Мăнукусем çук мар çитсен ватта,
Кинпе кĕрӳ вĕренĕсем те пур унта.
29.1108.

9.

Мана тӗл пулчӗ малтанхи хӗрарӑм,
Сӑнран-питрен пӗрре те начар мар.
Кӑмӑлӗ уҫӑччӗ ун. Турӑм арӑм.
Телейлӗччӗ унпа, ҫаплах калар.

Ик ывӑл, икӗ хӗр вӑл парнелерӗ,
Сисмерӗмӗр те ҫитӗнчӗҫ вӗсем.
Кӗтмен ҫӗртенех ҫитрӗ пурнӑҫ кӗрӗ –
Ӳсеҫҫӗ мӑнуксем, ҫӗн хунавсем.

Ӑсанчӗ вӑхӑтсӑр ман чирлӗ арӑм
Леш тӗнчене. Тӗл пулчӗ урӑххи.
Ӑна та вӑрахчен эп упраймарӑм, –
Ҫук, ҫӑмӑл мар арҫын хуйхи-суйхи.

Юлашкинчен сана курса суйларӑм, –
Тупа туса пӗрне те эп суймарӑм.
30.11.08.

10.

Ан айӑплӑр мана, тӑванӑмсем,
Ан айӑпла мана эс, ырӑ халӑх!
Чунра типмен-ха ҫепӗҫ туйӑмсем, –
Кун пек чухне ӳпкелешни те кӑлӑх.

Чи хӑрушши – пӗчченлӗх тӗнчере.
Никам та нихӑҫан ӑна ан куртӑр.
Килсе ҫитет-ҫке ватлӑх та пӗрре.
Ҫак чӑнлӑхра пайти те унӑн пур-тӑр.

Асту-ха, Пушкин та хӑй арӑмне
Пӗччен юлсан качча каймашкӑн хушнӑ.
Мана ан хурӑр ӑссӑр вырӑнне, –
Ман пеккисем эп пӗччен мар-ха, йышлӑ.

Эс пул ман виҫҫӗмӗшӗ, юлашки,
Тумхах кун-ҫулӑн асӑну курки.
30.11.08.

11.

Пĕрремĕш арăма, тен, Турă пўрнĕ?
Унпа эп ĕмĕрлерĕм ĕмĕре.
Пĕр шутламан çĕртенех çурлă-кĕрлĕ
Пурнаттăмăрччĕ чĕрĕ тăм пўртре.

Ырри те, усалли те – курнă тĕрлĕ,
Аш-пăш, юр-вар çитмен чылай чухне.
Ача-пăча çуратнă, çитĕнтернĕ,
Çапах пĕтме паман чăваш йăхне.

Пĕччен юлсассăн – иккĕмĕшĕ кирлĕ,
Пирте ăна калаççĕ – кĕленче.
Ăна тĕл пулнăччĕ эп хура кĕрлĕ, –
Каллех вăранчĕ чунăмри тĕнче.

Шута илсен, эс – виççĕмĕш пулатăн,
Вĕренпеле кăкрăннă çунатăм!
30.11.08.

12.

Сана савса куç хыврăм мĕнешкел!
Пуш сăмах мар, ку – манăн чунри кĕлĕ.
Çапах та манăн мар эс, питĕ шел,-
Кĕрекери хăнашăн каснă чĕлĕ.

Çын япали – самантлăх япала,
Унпа кивçен илсе куратпăр усă.
Тăван-пĕтенсемпе е ялпала
Сăмах татсан тин пулăттăнччĕ тусăм.

Аваннине курать те тĕпсĕр куç,
Хевте çитерейместь ярса илмешкĕн.
Çавăнпала куллен ман усăк пуç,
Пултараймастăп: «Манăн эс», – темешкĕн.

Питех инçе çитмешкĕн çав шая, –
Эп тăрса юлтăм пуйăсран кая.
06.12.08.

13.

Çапла, эс – манăн мар, ан туччĕ айăп,
Сĕнме кăна пултарăп кирлине.
Хушса е хистесе сăмах калаймăп
Сана, чи юлашки чун варлине.

Пĕрле вуншар çулсем ирттерсен кăна
Пĕрне-пĕри калама пулĕ – манăн.
Эс хальлĕхе – питех сайра хăна,
Кĕрсе тухсан каллех çула ăсанăн.

Хăна килсессĕн ларайmасть вăрах.
Йăли-йĕрки çапла, мĕскер тăвайăп?
Хăна кайсассăн – эп каллех хăрах,
Кунта манра та çук, санра та айăп.

Сана ăсатнă хыççăн – эп пĕччен,
Пĕрне-пĕри тепле тĕл пуличчен.
07.1208.

14.

Кун-çул пуçламăшĕ килет хитре
Ача çуралнă чух йĕрсе ярсан та.
Асран кайми сăваплă сехетре
Çывăхрисен хаваслăхне туятăн.

Малта кĕтеççĕ урăх самантсем –
Ачалăхпала çамрăклăх саманчĕ.
Юлашкинчен ўссе çынна çитсен
Тин сарăлса çитет этем çуначĕ.

Тумхахĕсем çук мар-ха çул çинче,
Хурапала шурра кашниех курнă.
Епле пулсассăн та, хитре тĕнче,
Хитре çак Çĕр çинчи пĕртен-пĕр Пурнăç.

Ун тупсăмĕ – таса юратура,
Апла пулсан эс туп ăна, шыра.
07.12.08.

15.

Вун пиллӗкмӗш сонет – кӑшӑл ҫыххи.
Куннехинче ӑна эп пӑхӑнмарӑм.
Ку – ватӑ ҫын шухӑшӗсен пуххи,
Епле пулсан та, катӑлаймӗ парӑм.

Ҫак ярӑмри ансат сонетсенчен
Ҫыхмастӑп эп, хирти чечек пек, кӑшӑл.
Шап-шурӑ ҫӳҫлӗ сӑваҫ чӗринче
Шухӑшӑмсем хускалчӗҫ йӑшӑл-йӑшӑл!

Вӗсем, тӗнче пек, кивӗ, хӑтлӑ мар,
Ҫавӑнпала мана памаҫҫӗ канӑҫ.
Ҫунсан-ҫунсан сӳнет вӗри кӑвар,
Юлать пӗртен-пӗр, кӗл пек, сӳннӗ шанӑҫ.

Вулакана вун пиллӗкмӗш сонет
Кив ҫылӑхсемшӗн каҫарма сӗнет.
07.12.08.

16.

Пуҫламӑш пур-тӑк – вӗҫӗ пур, пулать.
Ҫуралнӑ хыҫҫӑн – пур хӑрушӑ Вилӗм.
Хӑй ҫавине вӑл хӑйраса тӑрать,
Унччен ҫиҫет-ха, Пурнӑҫ илӗм-тилӗм.

Пырать илемлӗ пурнӑҫ вӑраха
Е тепӗр чух сӳнет, ҫурта пек, хӑвӑрт.
Кил-йыш юлать ун хыҫҫӑн тӑлӑха,
«Ан парӑн Вилӗме, унпа эс ӑмӑрт»,-

Ҫапла хушать пире шалти пӗр сас,
Хӑрушӑ Вилӗме те ҫӗнтеретпӗр,
Ача-пӑча пӑхса ҫитӗнтеретпӗр, -
Йӑх тымарне пӗтме парас пулмасть.

Ӗнтӗ кун-ҫулӑн вӗҫӗ инҫе мар,
Ҫапах та пур, юлать-ха чӗр тымар.
07.12.08.

17.

Юратура ман таса кăмăл тĕпсĕр.
Хăш чух чăрмав кӳрет вăл пурнăçра.
Çапах та юратусăр пурнăç – тĕссĕр,
Аçта кайсассăн та эс ман асра.

Эп пурнăçра кермен çурт лартаймарăм,
Тертленсе куртăм чĕрĕ тăм пӳртре.
Манпа пĕрле тертленчĕ çамрăк арăм, –
Çапах пĕрле çын пурнăçĕ хитре.

Эп туянса çӳретеймерĕм «Волга»,
Велосипед – çуран урапапа
Инçе çула тухса çӳрерĕм лăнкă
Ялти тумхахлă, пылчăклă çулпа.

Çăлăнăçа юратура çеç тупрăм,
Ăна эп хам мĕн виличченех упрăп.
07.12.08.

18.

Тухатăп урама. Унта – Раштав.
Календарьпе хĕл килсе çитнĕ тапхăр.
Садри улмуççисем çаралнă ав,
Ĕнтĕ пуçа та çĕлĕк тăхăнатпăр.

Анчах çаплах юр çук. Çĕр хуп-хура.
Кунсем кĕске, тăр-кăнтăрла та ăмăр.
Юр вырăнне çаплах çăвать-ха çумăр,
Папка тавраш кӳпчет çакна кура.

Хăш-пĕр тĕмсем шап-шур чечек те çурнă,
Ман пек, кĕр ăшшипе улталанса.
Тăсасшăн ĕмĕрне çапла ман пурнăç,
Ларасшăн мар шăнса хытса, хăрса.

Улталанасшăн, классик калашле,
Чӳречерен шакканă чух хĕлле.
07.12.08.

19.

Сахал мар ĕçлерĕм эп пĕр пуссăр, –
Сăваçа паян та кам тӳлет?
Кун иртет кичем, питех те уссăр,
Çырăнмасть ни сăвă, ни сонет.

Вăхăтра алла усса лармарăм,
Тăрăшрăм куллен укçашăн мар.
Халăх умĕнче çук мар-ха парăм, –
Кризис килсе çитрĕ – мĕн тăвар?

Ăна эп те ӳтĕмпе туятăп,
Чĕрере ман – тунсăх, ырату.
Поэта мĕн кирлĕ? Юрату.
Эпĕ ăна санăра çеç куратăп.

Сансăр ман хавхалану сӳнет –
Çырăнмасть ни сăвă, ни сонет.
18.12.08.

20.

Ăрусем килеççĕ те каяççĕ, –
Пĕр ăру каять,килет тепри.
– Çăмăл пултăрччĕ, – тесе калаççĕ, –
Кайнисен çăвасенчи тăпри.

Тăприсем çĕрпе кĕç танлашаççĕ,
Вĕсене пусса илет çерем.
Сумлă ячĕсем те манăçаççĕ
Кайнисен çак вăхăт иртнĕçем.

Теприсен çук мар-ха ĕнтĕ ячĕ –
Патшасен, кнеçсен, çар пуçĕсен.
Мĕн юлать? Юлать сăмах хăвачĕ,
Пĕлĕт пек, кив ĕмĕрсем иртсен.

Пит кичем ман пулса тухрĕ сăвă.
Пур тĕшши те – поэтсем ыр-сывă.
19.12.08.

21.

Хам çинчен пулмарĕ-ха ку сăвă,
Тӳрлетсе-и е хушса калам:
Классиксем – ак камсем ырă-сывă,
Савăнатăп çакăншăн паян.

Хам пирки мĕнех калас? Ĕçлерĕм,
Тӳсмеллине тӳсрĕм мăй таран.
Тухрăм эп çынна аран-аран,
Чи хура ĕçе те тиркемерĕм.

Ачасем пăхса ӳстертĕм. Йышлă
Мăнуксем те халĕ тĕнчере.
Пулччăр хамăран та çивĕч ăслă, –
Пурнăçа эп пурăнтăм хитре.

Çавăнпа ыттисене ăмсанмăп, –
Ӳкĕнмесĕр, тивĕçлĕн ăсанăп.
19.12.08.

22.

***1957 çул. Чăваш писателĕсен керменĕ. Кулуарти калаçу. П.Хусанкай: "Анатолий, "Ялав" редакцийĕнче мана санăн поэму тухать терĕç. Халĕ псевдоним тупас пулать. Геннадий Лисина тупса патăмăр акă: Айхи. Ермилова мĕнле палăк лартăн-ха? Чăваш ячĕ кирлĕ.***

***– Пур ман псевдоним, райхаçатра усă кураканни: Юман.***

***– Юман? Питĕ аван! Çĕнĕ Юман пултăр.***

Çамрăк чух курса çапла каларĕ
Ятлă-сумлă çăвăç Хусанкай.
Чăвашсен Юманĕ пулнă мар-и?
Асапне тусейнĕ вăл самай.

Хăй талантлă пулнă теççĕ шутсăр,
Чăннипех те мухтанмалăх пур.
Тен, чăваш пулмашкăн, чăн та, йывăр?
Ма Мĕтри Юман çак курнă хур?

Ман тĕле те кӳчĕ чĕрĕ тамăк
Çакă ят - çунат сарас чухне.
Мĕн кĕтес çитсен кун-çул вĕçне?
Кирлĕ мар мана, туссем, чăн палăк.

Пĕр сонет юлни те пит паха –
Çакă пулĕ уссăм халăха.
19.12.08.

23.

Капланнă туйăма тек чараймарăм,
Хайларăм эп сонет çине сонет.
Çапла çуралчĕ ярăм хыççăн ярăм,
Юлашкинчен каларăм эп: «Çитет!

Çырмастăп тек сонет. Мун пур трилоги,
Унта тĕрленнĕ çăмăл мар шăпам», –
Тесе чарасшăн пултăм хама хам.
Шухăшсене пӳлсе лартайрăм тĕкĕ.

Сана тĕл пулнă хыççăн çĕнĕрен
Ман тĕкĕ ишĕлчĕ, çурхи шыв илнĕн.
Ăна юхтарчĕ пурнăç – пăр-çĕмрен, –
Ишсе тухма пултарăпăр-ши иккĕн?

Каллех кĕсмен-перо тытма тивет,-
Çапла поэт шăпи. Ку – ман тивлет.
05.01.09.

24.

Пĕтмен-ха манăн пурнăç. Ишмелле,
Тинĕсри пек, çилхеллĕ хумсем урлă.
Ишевĕ çăмăл мар, яланхилле, –
Çӳлтен çăвать сив çумăр юрлă-пăрлă.

Самантлăха çук канăç. Çавăнпа
Пĕччен тĕллев патне çимешкĕн йывăр.
Кĕрлет-шавлать, варинкке евĕр авăр,
Туртса кĕресшĕн хăй тĕпне вăйпа.

Этем кун-çулĕ - вĕççĕр кĕрешӳ.
Ялан килет ăна шăпа çул урлă.
Çакна пĕр хутчен мар эп тӳссе курнă, –
Унпа тăвас пулать халь килĕшӳ.

Пар аллуна, тăванăм, чĕр инкек
Ун чух пире вăл хăратаймĕ тек.
05.01.09.

25.

Çак çут тĕнчемĕр тĕрлине вăл курнă, –
Адампа Ева килнĕ те малтан,
Тин Çĕр çинче те чечекленнĕ Пурнăç,
Çăтмахри пек тĕлĕнмелле кунтан.

Çавăнтанпа Çĕр çаврăнать канмасăр, –
Каять те пĕр ăру – килет тепри.
Çапах вăл çаврăнма пăрахмĕ мансăр, –
Мĕне тăрать пĕр çын е ун тăпри!

Тăмран çуралнă – пурте тăм пулатпăр,
Çак чăнлăхран иртекенни пулман.
Ни чи хаяр патша, ни кнеç, ни паттăр
Çамрăкланса яланлăха юлман.

«Лере» кайсассăн эпир пурте тан, –
Унччен хуçаланать кашни шуйттан.
06.01.09.

26.

Тĕнче пек кивĕ шухăша ан тиркĕр,
Тунмастăп, манăн сонетсем кичем.
Ку тарана та çитрĕм, Турра шĕкĕр!
Çĕн ĕмĕрте тата мĕнех кĕтем?

Эп çутă тĕнчене тĕлĕнтерейменĕп,
Ман пеккисем сахал-и Çĕр çинче?
Мĕн пӳрнине илмешкĕн тивĕç – илĕп.
Пур манăн хамăн та хитре тĕнче.

Унта эп пулнă çамрăк та хаваслă,
Асап та тӳснĕ, курнă хура-шур.
Ман пĕчĕкçĕ тĕнче те тарăн ăшлă,
Телейлĕ юрату та пулнă, пур.

Çавăнпала çынна эп ăмсанмастăп,
Сонетсенче хам тĕнчене манмастăп.
06.01.09.

27.

Килте асли пур чух этем телейлĕ,
Атте-анне, ыр сывă асатте
Асаннепе пĕрле, аппапала тете –
Вĕсен хӳттипеле кун-çул илемлĕ.

Е куками, е кукаçи те пур пулсассăн –
Ун пек чухне ик хут телейлĕ эс.
Туятăн Çĕр çинче хăвна хавассăн,
Чĕнет малашлăха тăван кĕтес.

Çулсем хур кайăк карти пек вĕçеççĕ,
Куçаççĕ эстафета йĕркипе.
Ыран – эс ху асли, сан ачусем ӳсеççĕ,
Мăнукусем чупаççĕ чип-чипер.

Асли пулмашкăн çăмăл мар иккен –
Йăх явапне халь ху çине тиен.
28.01.09.

28.

Хăш самантра иртсе каять ачалăх?
Хăш самантра яш ĕмĕр çухалать?
Юлаççĕ тĕлĕк пек çеç асăнмалăх
Ма тăм тивет çӳçе те сухала.

Ĕнер кăна шкула чупса çӳренĕ
Сумка çакса эпир, ача-пăча.
Паян хыçра – вуншар çулсен вĕренĕн
Пуранса юлнă тĕввисем анчах.

И-43789



...БИБЛИОТЕКА
Ц...
Респуб...

Вёсем тухмаççӗ асăмран пӗри те,
Ырри те, усалли те чӗрере.
Ик-виçӗ çыннăн ӗмӗрне те çитӗ
Тӳссе курни çак çутă тӗнчере.

Чӗре çунать – юлать сив кӗл те кăмрăк,
Чунсем кăна çаплах хитре те çамрăк.
28.01.09.

29.

*В своей стране я словно иностранец.*
(Сергей ЕСЕНИН)

Ирпе урампала иртсе пыратăп,
Сергей Есенин сăвăç калашле,
Тăван ялта та ютри пек туятăп
Хăш чух хама, таврăннă май киле.

Коррупци, акци, дивидент, субсиди,
Кредит, дефолт... Мӗн чухлӗ ют сăмах
Ку чух калаçăва сӗкӗнсе кӗчӗ, –
Тӗлӗнмелли çук мар-и-ха, чăнах?

Пур доллар, евро... Тупăнчӗ халь кризис.
Вăл анчӗ йăтăнса кӗтмен çӗртен.
Пӗр-пӗринчен ыйтать иртен-çӳрен:
«Кала, пулать-и, çук-и унăн вӗçӗ?»

Тӗнче хуранти пек пăтраннă чух
Ахаль çын ыйтăвне хуравӗ çук.
04.02.09.

30.

Тахçанах – ача çулӗнче чухне
Эп хаçата ярса парсаттăм сăвă.
Пичетленсен епле савăннине
Сире халь каласа пама та йывăр.

Кайран пуçларăм çырусем çырма –
Корреспонденци, очерк та тӗрленчӗк.
Хама та кам кăна хуравламан –
Кун-çул вӗçне кил çырупа пӗвенчӗ.

Ят-сумлă поэтсем, тус-тăвансем –
Чылайăшĕ тек çук – пиртен ăсаннă.
Анчах çырусенче ыр сассисем
Архив шăплăхĕнче çаплах сыхланнă.

Вĕсем тек калаçççĕ манпала –
Кив хут та - мĕн асамлă япала.
04.02.09.

31.

*Брожу ли я вдоль улиц шумных,*
*Вхожу ль во многолюдный храм,*
*Сижу ль меж юношей безумных,*
*Я предаюсь моим мечтам.*

*Я говорю: промчатся годы,*
*И сколько здесь ни видно нас,*
*Мы все сойдем под вечны своды –*
*И чей-нибудь уж близок час.*

(А.ПУШКИН)

Поэзири ĕçтешĕм асăрхарĕ:
«Мĕскер пулайрĕ, ман лаштра Юман?
Сăпса е вĕлле хурчĕ сăхрĕ мар-и?
Хальччен кун пек кичеммине курман!

Сонетусен ăш-чиккинче – элеги,
Чуна ыраттараççĕ вуласан.
Кун пеккине асăрхаман ĕлĕк эп,
Тархасшăн, тӳр сăмахшăн каçарсам».

Тĕрĕссине каларĕ-ха ыр тусăм.
Ăна хуравласа мĕскер калас?
Ку чух чăнах та манăн пуçăм усăк,
Çавăнпала кичем тухать те сас.

Кун-çул мĕнле – ман юррăм та çапла,
Ĕçтешĕм-тусăм, ăнлансам çакна.
05.02.09.

32.

Килте куллен питӗрӗнсе ларатӑп,
Хуралҫӑ евӗр, ир те каҫ пӗччен.
Юрать-ха, телевизор пур, куратӑп
Ӑна куллен каҫ пуличчен, ирччен.

Унта пӗр передача тупнӑ вырӑн –
«Кӗтсем мана». Пит кирлӗ ӗҫ тӑвать:
Ҫухалнӑ ҫынсене пӗр ырӑ вырӑс
Шерлок Холмс евӗр шыраса тупать.

Ку чух хыпарсӑр ҫухалаҫҫӗ йышлӑн
Вӑрҫӑринчен пӗрре те кая мар.
Мӗнле кӑна шӑпа ҫук! Усӑ саслӑн
Ман кӑшкӑрса ярас килет: «Кошмар!»

Ялта та пӗрре мар халь ун пекки,
Хӑҫанччен пырӗ ку, екки мекки!
05.02.09.

33.

Тӗнчене мӗскер икке уйрать?
Мӗн хирӗҫтерет халӑхсене – кам калӗ?
Ҫӑмӑл-и ӗҫ ӗҫлеме уйра?
Кам хирте пӗччен суха сухалӗ?

Тен, ҫакна пӗлет кашни айван,
Ҫитӗнсе ӑс пухса пынӑ майӑн:
Эртелпе урпа ҫапма аван,
Пӑттине ҫимешкӗн иккӗн лайӑх.

Мӗн хирӗҫтерет пӗрне-пӗри?
Кутӑн кӗнӗ мул, укҫа та ылтӑн, –
Пӗрин чиксӗр харпӑрлӑх пурри,
Тепӗрин кил харпӑрлӑхӗ кӑйттӑ.

Мӗн чул тарӑн ҫакӑ ик ҫыран –
Ытларах юта тухса пыран.
10.02.09.

34.

Ак тепӗр талӑк сансӑр иртсе кайрӗ.
Ыраттарса ман тунсӑхри чуна.
Пӗр талӑк та кун-ҫул саманчӗ мар-и, –
Анчах эп шелсӗр ӑсатап ӑна.

Пӗр талӑк хыҫҫӑн тепӗри пӗр вӗҫӗм
Тӗлӗнмелле иртеҫҫӗ пӗрешкел.
Пӗччен чухне пач ӳсӗнмест ман ӗҫӗм,
Кичем пусать чуна та мӗнешкел.

Ҫавӑнпала шел мар мана пӗрре те
Пӗччеллӗхри сӗм тӗттӗм талӑксем.
Ахальтен мар эп ир те каҫ кӗтетӗп,
Чӗнетӗп хӑнана сана: – Килсем!..

Пӗрре иртернӗ кун ҫеҫ маншӑн ылтӑн.
Калатӑп кун ҫинчен сана эп хыттӑн!
11.02.09.

35.

Мӗн вӑл кил ӑшши? Этем ҫуначӗ.
Ун телейӗ – кил ӑшши пурри.
Кил ӑшши – хӗрарӑмӑн чӗри.
Ун ӑшшисӗр кил ӑшши пулмастчӗ.

Кил-ҫурта ахаль-и крепость тетпӗр.
Хӳтлӗх те вӑл, шанчӑк, ҫирӗп тыл.
Арлӑ-арӑмлӑ ҫемье кӗтетпӗр –
Унсӑрӑн кил тӑлӑх – пӗлнӗ пул.

Эс сайра-хутра кӗрсе тухатӑн,
Хӑваратӑн хӑвӑн ӑшшуна.
Эс кӑна мана халь вӑй паратӑн,
Ӑшӑтатӑн ватлӑхри куна.

Эс килсен пӗччеллӗх пытанать, –
Санӑран кӑна вӑл вӑтанать.
13.02.09.

36.

Ку чух пире тăрук тĕлĕнтереймĕн
Синкерлĕ-хурлă хыпарпа текех.
Çĕр çаврăнса кунпа çĕр иртнĕçемĕн
Пĕтетпĕр мар-и вăрçăри пекех.

Пушар тухса вут-çулăмра çунатпăр,
Çулсем çинче аварие лексе,
Шăна пек, тăкăнатпăр, аманатпăр,
Хурах кăнтать çĕçĕпеле чиксе.

Паян эп илтрĕм: шкул ачи пĕр вата
Учителе ăсатнă çăвана.
Леш «иккĕ» лартнă пулнă-мĕн... Туятăр –
Çапла майпа вăл «таварнă» ăна.

Кун пеккине хальччен илтменччĕ, çок!
Ку пулчĕ маншăн чăннипех те шок.
19.02.09.

37.

*Будь проклят, дьявольский листок!*

Р.БЕРНС.

Эп илтрĕм ăнсăртран РЕН-ТВ тăрăх
Ыйтать пĕр хуçаран Тигран Кеосаян:*
– Кам пуян çын, кала?..
– Вăл – тытман вăрă.
Кам ытларах вăрланă – çав пуян.

Çак тӳрĕ калаçу мана та шутлаттарчĕ,
Çĕрле «сенкер экран» умне ларсан.
Укçа ку чух çынна ухмахлантарчĕ,
Ивановпа** пĕр шутлă каласан.

Укçи вăл пултăр-ха, пурне те кирлĕ.
Тивĕçлине илни каять усса.
Ямат укçаллă çын вăл йывăр чирлĕ –
Пуять улталаса е пуç касса.

Çакна пĕлсе каланă тепĕр гени: ***
Укçа – ылханлă хут татки вăл, тенĕ.
20.02.09.

---

* Телепрограмма ертӳçи.

** К.Иванов, «Нарспи» авторĕ.

*** Шотлан поэчĕ Роберт Бернс.

38.

Эп генисен çулне-йӗрне сӑнатӑп:
Пӗрин те шӑписем ансат пулман.
Чун-чӗрисем кӑварланса çунсан та,
Тӗл пулнӑ çул çинче пӗр-пӗр ӑнман.

Хӗн-хурпала терт тӳснӗ, асапланнӑ,
Элекçӗсем кӗскетнӗ ӗмӗрне,
Хурт пек кӑшланӑ çепӗç чӗрине,
Çак сӑлтавпах çын вӑхӑтсӑр ӑсаннӑ.

Çук, парӑнман-ха генисем алхапӑл,
Пӗр шит те пӑрӑнман тумхах çултан.
Пурне те паллӑ: иртнӗ хыççӑн тӑвӑл,
Халь ячӗсем чи сумлӑ вырӑнта.

Тӗнче авалтанпах пач улшӑнман –
Ку чух та сахал мар пирте ӑнман.
03.03.09.

39.

Черечӗпе кӗç килсе çитрӗ март.
Вӑл чӑвашла пуш уйӑхӗ пӗлетпӗр.
Ыттисенчен март çемçерех, юмарт,
Ир-каç çаплах хӗл чӗпӗтсе илсен те.

Хӗвел пӑхать кунран-кун ӑшшӑнрах,
Çӳл тӳпене çӗкленсе пынӑ майӑн.
Ман пек кам тертленсе çӳрет хӑрах,
Хӑйне туйма пуçлать çав çын та лайӑх.

Çӗклет ман чӗрене те çур ӑшши.
Тулта – уяв. Хӗрарӑмсен уявӗ.
Ку – юрату уявӗ, ун ташши,
Кӗрет пӗччен киле те çур шӑв-шавӗ.

Эс çук та уявра – пур чӗрере,
Эппин, çынран эп кая мар, эре.
08.03.09.

40.

Гагарин космонавтăн юбилей:
Паян тултарнă вăл та çитмĕл пиллĕк.
Ун паттăрлăхĕ – пирĕншĕн телей,
Çĕн ĕмĕр çыннисемшĕн ку вăл – ĕлĕк.

...Ун чух эп ăс пухаттăм Хусанра.
Хаçатçăсене панăччĕ задани:
Совет çынни кĕç космоса ăсанĕ –
Çакна епле пĕлтерĕр хаçатра?

Çав ĕмĕтри хаçатăн макетне
Ăмăртмалла хайларăмăр çак питĕ.
Кĕтрет-самант хăçан çитессине,
Паллах, эпир ун чух пĕлмен пулин те.

Саманчĕ кĕттермерĕ пит вăрах –
Пире вăл тĕлĕнтерчĕ çав çулах.
09.03.09.

41.

Гагарин – акă кам ĕмĕрлĕхе
Юлать чĕррисенчен те чĕрĕ, сывă.
Çук, чĕрĕ шыв тупман-ха халлĕхе,
Ун ячĕпе хыватпăр юра-сăвă.

Çаплах ыр-сывă вăл чĕремĕрте –
Çут сăнĕ те, кулли те юлĕç çамрăк.
Çĕн ĕмĕрсем килсе çитсессĕн те
Ун тăприне çаплах хуплаймĕ курăк.

Çакна паянах калама пулать.
Вăл вăхăта хăйне те парăнтарчĕ,
Хăй хыççăн кăйкăр тарăн йĕр хăварчĕ –
Çавăнпала халь кăмăллăн кулать.

Гагарин тухрĕ пирĕн ăруран,
Çавăнпала хаваслă эп, Юман.
09.03.09.

42.

Ун хыççăн тухрĕç кăйкăрсем нумайăн,
Кашнин мухтавлă ячĕсем асра.
Чăваш ачи те вĕçрĕ – Николаев –
Ялтаччĕ эп çав чаплă самантра.

Килте пĕччен ачапала ларaттăм,
Вăхăтлăха ĕçрен пушаннă чух.
Кĕтмен çĕртен поэзири çунатăм
Вăй-хал илсе çӳле çĕкленчĕ шух.

Пĕтĕм чăваш тĕнчин çĕкленчĕ чапĕ
Хĕвеллĕ çуллахи хавас ирпе.
Хаçат çынни, çыру çӳретрĕм эпĕ
Çав çулсенче кăйкăрпала хăйпе.

Ăçтан манайăн çавă вăхăта?!
Ăна чарса калас килет:
– Тăхта!
09.03.09.

43.

Нумай пулмасть эп пултăм пĕр ялта.
Ку чăваш ялĕ самаях вăл пысăк.
Хуранти пек вĕретчĕ пурнăç та кунта –
Куннехинче ман кăмăл юлчĕ пăсăк.

Урамĕсем пуш-пушă та кичем,
Ача-пăча сасси илтсе пулмарĕ.
Хăшин-пĕрин пач хупă çурчĕсем –
Леш, «тĕтĕмсĕр яла» ăсаннă мар-и?..

Ялти хисеплĕ, тахçанхи юлташ
Тĕл пулнă майăн шухăшлăн каларĕ:
– Тин иртсе кайнă çăмăл мар çулта,
Шутла-ха, пĕр ача та çуралмарĕ.

«Пĕрре те çуралмарĕ...» Çак сăмах
Хура юпа пек туйăнать, чăнах.
11.03.09.

44.

Мĕнех калам сире халалласа,
Çĕн ĕмĕрти ытарайми яш-кĕрĕм –
Чăваш çыннин ынатлă ывăл-хĕрĕ?
Ӳссе çын пулăр чунпала таса.

Мĕскер тытса тăрать çут тĕнчене?
Вăл – Юрату. Эсир çакна ан манăр.
Атте-аннесене, тăван çĕре юратăр,
Хисеплĕр ыр сунса ваттисене.

Чăн юрату тăсать вăл ĕмĕре.
Мăшăрсене чун-чĕререн юратăр.
Пĕр-пĕринпе ун чух çеç юп куратăр,
Хам пĕлнине калатăп эп сире.

Усал çынна ан суйлăр, ан юратăр –
Унпа çывăхлансассăн хур куратăр.
12.03.09.

45.

Калаççĕ: вилĕмрен те вăйлă пурнăç.
Ку – юмах мар, чăнах çапла-и, тен?
Суккăрланса юлсан роман та çырнă
Островский – пиçĕ хурçă пек этем.

Тепри шăлĕпеле çырма пултарнă
Хайлав, ик аллине пӳкле татсан*.
Ун умĕнчен те сĕмсĕр вилĕм тарнă,
Çапса хуçма вуçех пултарайман.

Тĕлĕнтерсех тăрать халь телевизор
Сенсаципе пире хутран-ситрен:
Пĕр хĕр ачан алли çук. Мĕскĕн сусăр...
Ури пӳрнисемпе çырать хитрен.

Çапах ыр-сыв ал-урапа çӳресчĕ,
Çут тĕнчене ансат илем кӳресчĕ.
13.03.09.

---

* Владислав Титов. «Всем смертям назло» кĕнеке авторĕ.

46.

*Хăш чух санран*
*Вут-хĕм тухса*
*Ялĕпеле*
*Çунаççĕ,*
*Хуйхă тесе*
*Çынсем вара*
*Каллех сана*
*Тытаççĕ...*

(Н.ШУПУÇÇЫННИ. «Чĕлĕм»)

«Табак ан туртăр, ан ĕçĕр эрех.
Мĕскер усси?» – тесе поэт ăс панă.
Çук, итлемен ăна пурĕпĕрех,
Инкек тӳссе чылайăш асапланнă.

Ларатăп телевизор умĕнче,
Курни-илтнисенчен шалт! тĕлĕнетĕп:
Пĕрре те улшăнман пек çут тĕнче
Е çĕнĕ ĕмĕр çыннисем хăйсем те.

Ку чух та терт куратпăр çавнашкал,
Пире çине-çинех астутараççĕ –
Ĕçке пула пуçне çини кал-кал,
Чĕлĕмçĕсем, тамăкри пек, çунаççĕ.

Хăçан-ши ăс кĕрсе çитет пире?
Хăçан сиретпĕр кивĕ чир-чĕре?
14.03.09.

47.

*Чăваш чĕлхи ячĕпе*
*Пурте пĕр пулар!*

(ÇЕÇПĔЛ МИШШИ)

Хаçат-журнал тиражĕсем чакаççĕ,
Ку факт мана питех шутлаттарать.
Тăван чĕлхешĕн эпĕ, ват хаçатçă,
Самай ĕçлерĕм-çке хама кура.

Хаҫат пётсен тӑван чӗлхе те пӗтӗ,
Ҫакна чунпа туятӑп Ҫеҫпӗлле.
Ҫавӑнпала чӗнсе калатӑп пӗтӗм
Чӑваш ҫыннисене яланхилле.

Хаксем ҫыртаҫҫӗ ку чухне, ку паллӑ,
Анчах ӑҫта эсир, ҫӗн чӑвашсем?!
Ҫак ҫӗр ҫинче чӑваш юлать сахаллӑн,
Пӗтетпӗр пач вула та пӗлмесен.

Чӑваш ҫынни хӗн-хур сахал-и чӑтнӑ?
Паян неушлӗ чун-чӗремӗр хытнӑ?
15.03.09.

48.

Пӗр ватӑ критик ҫырнине вуларӑм,
Ӳпкелешет ҫыравҫӑ ушкӑнне.
«Ку чух хайлавсенче эп пач курмарӑм, –
Тесе ҫырать ҫакскер, – паянхине».

Ӑна хирӗҫлесе мӗскер калайӑн?
Кама хаклас, е хӳтӗлес кама?
Кунта, чӑнах та, пирӗн пур-тӑр айӑп,
Кирлех-ши ҫав териех васкама?

Ман критике тавай «Нарспи», «Онегин»,
Ӑна паян тавай «Вӑрҫӑпа мир».
Пуҫсем ҫинче тасалаймасӑр лӗкӗ
Ун пек шедеврсем кӗтмешкӗн ир.

Мӗскер аван, мӗскер начар паян –
Тин палӑрӗ, хакланӗ тин ыран.
15.03.09.

49.

Тӑван енре те пур, пӗтмен-ха шанчӑк,
Пур чакаракансем те вилӗме.
Йыхрав ярать ялти пӗр сумлӑ карчӑк –
Марье аппа юбилейне килме.

Ăна эп питĕ лайăх астăватăп.
Çĕр çул вăл тултарать кăçал. Ялан
«Кĕрӳ» тесе кĕтсе илетчĕ ватă
Çур ĕмĕр каялла, яла пырсан.

Самант пек иртрĕç çав çулсем, мĕн калăн?
Нихçан та таврăнаймĕç каялла.
Пуртех çитеймĕпĕр çĕре. Халь манăн
Çула пӳрнесемпе шутламалла.

Чăваш хĕрарăмĕ, Марье тăхлачă!
Сан пек хастар, мал ĕмĕтлĕ пуласчĕ.
20.03.09.

50.

Мĕн вăл ватлăх? Вăй та шăл çукки,
Ӳт тарни тесе тата калайăп.
Кунта çук пĕрре те санăн айăп –
Ватăлсан юлать çеç çын мĕлки.

Тинкӳне илет санне сасартăк
Чир-чĕр е кĕтмен инкек-синкек.
Терт тавраш куратăн апла мар тăк
Е капла асапланатăн тек.

Капланса килет çĕр тĕрлĕ шухăш,
Пĕринчен тепри кичемтерех.
Тек утса-чупса çӳреймĕн шухă,
Юрамасть ĕçме сăра-эрех.

Кăмăлу çеç вĕçĕмсĕр хитре,
Вăл çаплах вĕçесшĕн пĕлĕтре.
20.03.09.

51.

«Пĕччен, пĕччен...» - тесе ӳпкелешетĕп,
Анчах манран пĕччен реххи те пур.
Агафья Лыкова хĕрарăм, тем тесен те,
Çавсен шутне кĕмест-и, тусăм, кур!

Хутран-ситрен çаплах кăтарткалаççĕ
Тайга чăтлăхĕнчи фанаткăна.
Куç пек кĕтсе тăраççĕ, тархаслаççĕ –
Анчах юта ямасть вăл яхăна.

Хăйне çапла туять-и, тен, телейлĕ, –
Ăçтан пĕлсе пĕтерĕн эс ăна,
Цивилизаци ырлăхне тиркевлĕ
Песков Василий тупнă çак çынна?

Телей çине кашни пăхать хăйле.
Кама мĕн пўрнĕ – шалт! тĕлĕнмелле.
20.03.09.

52.

*ЮНЕСКО сайтĕнчи Атласра пирĕн çĕршыври 136 чĕлхе хăрушлăхне палăртнă. Пĕтсе пыракан чĕлхесен йышне патшалăх шайĕпе шутланакан... чăваш чĕлхине те кĕртнĕ.*

(Хаçатсенчен.)

«Эпир ĕмĕтленмешкĕн тивĕç», – тенĕ
Чăваш аслашшĕ Яковлев тахçан.
Ĕмĕчĕсем ун пурнăçа та кĕнĕ,
Шкул хупăннă куна шутламасан.

Шел, çав кунтан чăваш писме пуçларĕ
Тăван чĕлхипеле çырулăхран.
Ку улăп-çыннăн чун суранĕ мар-и –
Ăна хускатас марччĕ урăхран.

Тавах Турра! Çĕкленчĕ чăваш ĕçĕ
Ку чух Чĕмпĕр Енре те çĕнĕрен.
Ăна тăсасчĕ вилĕмсĕр пĕр вĕçĕм,
Асăрханасчĕ çĕнĕ йĕрĕхрен.

Анчах каллех çўрет хура хавха.
Чăваш, ан ман: упрасчĕ халăха!
21.03.09.

53.

Чăваш чĕлхи! Эп сахал мар вăй хутăм
Чĕмпĕр Енре сана упрас тесе.
Ырмасăр турăм утăм хыççăн утăм,
Малтанхисен пилне аса илсе.

Ку чух чăваш тĕнчи хулапа яллă,
Ăна çав халлĕн тивĕç хăварма.
Чĕлхе пĕтсен – чăваш пĕтет, ку – паллă,
Ун чух ман пурăнни те харама.

Чăваш ачи! Санра халь пирĕн шанчăк,
Кăварланса çĕклен эс Çеçпĕлле.
Ху сассуна ун пек парсан аванччĕ,
Упра ху халăхна эс, хӳтĕле!

Ун чух кăна чăваш тĕнчи упранĕ.
Пăлхавлă ватлăхăм тинех лăпланĕ.
21.03.09.

54.

Чăваш ачи пулса ялта эп ӳснĕ,
Калаçнă, вăй вылянă чăвашла.
Ырра та, усала та курса ӳснĕ,
Нихçан пуçа усман çавна пула.

Чăваш пулса ăс пухрăм, пурнăç турăм,
Чăваш Ене эп саврăм ялана.
Чăваш хĕрне савса чунпа эп пуйрăм,
Çук, урăх пурнăç кирлĕ мар мана.

Санпа эп чĕвĕл-чĕвĕл калаçатăп
Сасартăк тĕл пулсассăн чăвашла,
Çапла çеç тунсăх чунăма уçатăп,
Яш ĕмĕр тепĕр хут таврăнасла.

Чăваш чĕлхи – чун хуйхипе суйхи.
Чăваш чĕлхи вăл – юрату чĕлхи.
21.03.09.

55.

Ача пек, йывăр çуралать сонет,
Поэт чун-чĕринче тĕвĕленет те,
Ыр туйăм вăй илет е пач сӳнет –
Ăшша-сивве вăл сисĕмлĕ-çке питĕ.

Хĕвел пек, эс тухатăн тухăçран,
Сан ăшшуна эп аякран туятăп.
Ачаш, ыр туйăма çухатасран
Ăна шур хут çине çырса хуратăп.

Анчах хĕвеллĕ ир питех сайра,
Кĕрхи çанталăк пĕлĕтлĕ те ăмăр.
Сонет та çуралать салху вара –
Вĕçне-хĕрне тухмашкăн питĕ йывăр.

Ку – пирĕн вăрттăнлăх. Çавăнпалан
Ăна эп питĕрĕп çăрапалан.
22.03.09.

56.

Çĕр хыврĕ шурă кĕрĕкне. Çур кунĕ.
Парне пек, валеçет хăй ăшшине.
Тухатăп эпĕ ирпеле вĕр çĕнĕ
Шăпăрпала шăлма кил хушшине.

Унта-кунта йăваланса выртаççĕ
Эрех кĕленчисем, хут-чернилсем,
Пирус тĕпĕсемпе çыртмаллисен хутаçĕ –
Иртен-çӳрен яш-кĕрĕм «парнисем».

Ĕçеççĕ те туртаççĕ – пăрахаççĕ
Юлашкине шăп пирĕн хутлăха.
Влаçран та Турăран та хăрамаççĕ,
Пăсаççĕ ялти лăпкă хăтлăха.

Чарусăр пурнăç – хăçанччен ку пырĕ?
Чăваш тĕнчи капла ыран мĕн курĕ?
04.04.09.

57.

Сана эп курнӑ кӗҫӗр тӗлӗкре.
Ӑш тӗтӗмсӗр ҫунать аса илсессӗн:
Хавас сӑн-питлӗскер, пукане пек хитре,
Анчах темме мана пач тимлеместӗн.

Чипер куҫна тартатӑн аякка,
Сӑмах хушса чун-чӗрӳне уҫмастӑн.
Сӳнтертӗн ман, Хӗвел пек, шанчӑка,
Ҫавах сана хирӗҫлеме хӑймастӑп.

Часах ӑнлантӑм ютӑш сӑлтавне –
Санпа ҫап-ҫамрӑк йӗкӗт чӗвӗл-чӗвӗл!
Куратӑп юнашарах эп хӑйне –
Ӑшра сасартӑк йӳҫсе ҫитрӗ кӗвӗҫ.

Ай-хай! Ҫав каҫ асаплантарчӗ эрлӗк.
Ма курӑнчӗ-ши пурнӑҫри пек тӗлӗк?
15.05.09.

58.

Натюш... Ҫапла, ҫав ятлӑ аслӑ хӗрӗм
Ман пурччӗ. Питӗ шел, вӑл халӗ ҫук.
Ӑсанчӗ вӑхӑтсӑр. Ялан вӑл чӗрӗ
Ман асӑмра пурнать хам сывӑ чух.

Хӑй хыҫҫӑн икӗ ывӑлне хӑварчӗ,
Вӑл вӗсенче те пурӑнать паллах.
Тек таврӑнаймасан та каялла,
Ҫапах ҫук мар-ха пурӑнӑҫ хӑвачӗ.

Хӗр лартнӑ улмуҫҫи ӳсет садра,
Ҫур кунӗнче ҫуллен ҫакать шур шупӑр.
Ӑна курсан каллех ман хӗр асра –
Ун пӳ-сине ас илтерет вӑл шутсӑр.

Натюш... Ҫав ятлӑ пурччӗ манӑн хӗрӗм,
Ҫурхи садра ҫаплах ҫӳрет вӑл чӗрӗ.
18.05.09.

59.

Калаççĕ пĕлĕшсем: «Сăнпа эс çамрăк.
Чунпа та çамрăкрах ху çулунтан.»
Çунсассăн та эп пулайман-ха кăмрăк,
Çаплах, ара, калатăп кăмăлтан.

Эс пур чухне сăнпа-чунпа эп çамрăк,
Тулса çитет телейĕм мăй таран.
Эс пуррипе çунса пулмастăп кăмрăк,
Хăй ватлăх та тарать, хăрать манран.

Эс пур чухне кал-кал пырать ман ĕçĕм,
Санпа чух вилĕмрен эп вăйлăрах.
Эс пуррипе пурнас килет пĕр вĕçĕм,
Эс çук чухне çеç хӳтлĕхсĕр, хăрах.

Эс пуррипе синкерлĕ самана
Авсассăн та тек хуçаймасть мана.
23.05.09.

60.

— Кранк! Кранк!..
Каç пулттипе кĕтмен çĕртен
Пуçларĕ явăнма ула курак ман çийĕн.
Кĕçех тепри — ун мăшăрĕ-и, тен? —
Чул пек анать, чавса илесшĕн тейĕн.

Вĕсен чĕппи-мĕн ӳкнĕ йăваран,
Епле сиксен те çĕклеймест çуначĕ.
Çил çеç туратсене кăран суллатчĕ —
Çак мĕскĕне епле-ха хăтаран?

Ăçта йăви? Манран хăраççĕ, тен?
Тен, пулăшма мана ыйтаççĕ хытă?
Юрать-ха çукчĕ çак кушак е йытă.
Çунатсăр эп, манран мĕскер кĕтен?

Çунатлă кайăка та питĕ йывăр —
Ку тĕнчере. Çакна куратăр хăвăр.
24-25.05.09.

61.

Иртни аса килет. Ухсай пиччепеле
Чĕмпĕр шкулне курса çӳретпĕр иккĕн.
Кунта ун çамрăклăхĕ иртнĕ темелле –
Пăхать, сăнать кил картине вăл вичкĕн.

Унта пиçен кашлатчĕ, хыт хура,
Унта-кунта хуралса ларнă ишлĕк...
Çурт чӳречи çук, стенисем çара –
Йĕри-тавра хуçаланатчĕ нишлĕх.

Чăваш тĕнчи çĕкленнĕ кĕтесре
Çакна курма питех те пулчĕ йывăр.
Хула хуçи шантарнăччĕ пире:
– Çĕн ĕмĕре кĕрсессĕн килсе курăр.

Ун чух каллех çĕкленĕ Чĕмпĕр Ен,
Чăваш тымарĕ чĕрĕлĕ çуллен.
26.05.09.

62.

Тавах, улталаман хуçа пире,
Чăнах та чĕрĕлчĕ сăваплă вырăн.
Килсе курсамăр çĕнĕ Чĕмпĕре,
Кунта чăваш туять хăйне халь ырă.

Чăваш аслашшĕ пурăннă кĕтес
Каллех хитрен çĕкленнĕ, çĕнĕ тейĕн.
Ват кил хуçи те сывă тейĕн эс –
Вырнаçнă халь кунта хваттер-музейĕ.

Килен-каян кĕрсе тухать кĕлле,
Пур патриархăн чиркĕвĕ те, курăр:
Йăлт çĕнĕлле те йăлт ĕлĕкхилле,
Янрать кунта хаваслă сăвă-юрă.

Сĕве хĕрри патне каллех çул такăр –
Кунта килсессĕн ырă вăрлăх акăр!
26.05.09.

63.

Халь Яковлевăн палăкĕ те пур.
Ăна «Чăваш Турри» тесе каланă
Чĕмпĕр вырăсĕсем. Пĕлсе чухланă,
Унта пырсан чечек çыххи эс хур.

Ульянов тусĕпе пĕрне-пĕри пăхса
Вĕсем лараççĕ хулара каç-ирĕн.
Шел, курайманĕ çак куна Ухсай,
Сăмах ăсти – чăваш поэчĕ пирĕн.

Хула хăни, яш-кĕрĕм туртăнать
Кунта ахальтен мар, çакна туятăр.
Чăваш аслашшĕ сывă пурăнать –
Çаплах вăл пирĕнпе, çаплах вăл паттăр.

Эппин, çук мар-ха шанчăк пирĕн те
Ку чухнехи Ульяновск – Чĕмпĕрте.
26.05.09.

64.

*Анатоли ЫРЬЯТА*

Пире «Канаш» хаçат çак тăванлатрĕ,
Поэзири ĕçтеш тата аташ.
Яш ĕмĕрĕн, экран çинчи пек, кадрĕ
Юлайрĕ ялана, Ырьят юлташ!

Унта, паллах, çук мар-ха япăххи те,
Çавах та аванни вăл – ытларах.
Ĕçре туптанса пиçнĕ ырă витĕм
Вăл юлнă, пур, вăл пурăнĕ вăрах.

Сăмах ăсти пулмашкăн питĕ йывăр,
Ансат йĕркесенче – этем шăпи.
Кашнин асап-тертне тÿсетĕр хăвăр,
Çаплах çын телейне те тейĕп-и?

Ĕçри юлташăм, ваттинчен салам,
Ыр-сывă пул тесе телей сунам!
27..05.09.

65.

Славян Çырулăх Кунĕ пур. Пур Пушкин,
Некрасов пур, пур Тютчев ырăссен –
Культура тӳпинчи – яр-çутă ушкăн,
Календарьте пур Кунĕсем вĕсен.

Мана памарĕ канăç чăрсăр шухăш –
Пур, Яковлев пур пирĕн, чăвашсен,
Тесе тĕрленчĕк çырнăччĕ эп шукăль,
Ăна хисеплесе уяв иртсен.

Çапла çуралчĕ Яковлевăн Кунĕ
Çурхи Чăвашкасси урамĕнче.
Вăл пур çĕрте те халь йăлана кĕнĕ,
Çуллен иртет патшалăх шайĕнче.

Чăваш чĕлхин те Кунĕ пур паян,
Унпа эпир те чунпала пуян.
31.05.09.

66.

«Талвир çулталăкĕ» тесе пĕлтернĕ
Патăрьелсем хăюллăн кăçала.
Хальччен кунтан эп иртсе çеç çӳренĕ,
Кăçал тин кĕрсе куртăм ку яла.

Чăвашĕ те, тутарĕ те пĕр йышлă –
Çакна курса ĕнентĕм тепĕр хут.
Çавăнпала ку ял хула пек ăшлă –
Питех те килĕшрĕ, пулмарĕ ют.

Писатель акнă вăрлăх кӳнĕ çимĕç,
Çакна курса тăратăн ку ялта.
Ӳсеççĕ çамрăк калчасем сип-симĕс
Пуласлăхлă вулавăшпа шкулта.

Кунта малашлăха уçаççĕ алăк –
Писателе савса лартасшăн палăк.
07.06.09.

67.

Ку ыйтăва хăй кăлава çĕкленĕ.
Проекчĕ хатĕр, умĕнче выртать.
Ял халăхĕ пуçарнă ĕçĕ çĕнĕ,
Анчах ăна халь хакĕ çеç «çыртать».

Çапах пачах çук мар-ха майĕ-шывĕ,
Пур Мускавра ун çывăх тусĕсем.
Тăванĕсем Талвирăн ырă-сывă,
Тăсаççĕ туслăн аллине вĕсем.

Лара-тăра пĕлмест Николай Глухов –
Талвир кил-çурчĕ пур, юсамалла.
Вăл, калăн, хăй те карăнтарнă ухă –
Инçетрине курасшăн малалла.

Чĕлхи çинчен каймасть виç сумлă ят:
Талвир, Юхма, Митта – пур виç çунат.
07.06.09.

68.

Ят тенĕрен, вĕсем питех те йышлă,
Кашниех тивĕç бронза палăка.
Çунаççĕ çăлтăрла, кашниех чыслă,
Кашни сăваплă, кирлĕ халăха.

Хăшне манса хăварасран хăратăп –
Пĕлет хăй вулаканăм кашнине.
Арапуçри Миттасене чыслатăп –
Пиччĕшĕпе ир хăрнă шăллĕне.

Васлейпе Петĕр çуннă йăлтăр-йăлтăр,
Çаплах çунаççĕ пирĕн тӳпере.
Васлей пур, Анатри, ыр-сывă çăлтăр,
Поэт-философ Исмуков тепре.

Сарпи, Кервен, Кушманов – виç поэт,
Тен, пур татах çĕн çăлтăр – кам пĕлет!
09.06.09.

69.

Мана, паллах, Митта Васлейĕ çывăх,
Вĕреннĕ аннепе вăл Чĕмпĕрте.
Ыр ят-сумне асăнмасассăн çылăх,
Ăна пĕлеттĕм, курнă эпĕ те.

Калаçура анне тек асăнатчĕ
Тахçан пĕрле вĕреннĕ çулсене.
Куç умĕнче ун сарăлнă çуначĕ,
Поэт хастарлă, шухă яш чухне.

— Ура çине тăрса вулатчĕ сăвă
Хусанкайпа шкулта пĕрле чухне, —
Тесе калатчĕ ман анне. — Те сывă,
Те çук — пĕлместĕп халĕ шăпине.

Анне кайсан эп Миттаран ыйтсаччĕ —
Поэт ăна вăл хăй те астăватчĕ.
09.06.09.

70.

Кĕтмен çĕртен Митта та ăсансассăн,
Райхаçатра тертленнĕ кунсенче
Шупашкартан Юмарт Геннадий тусăм
Ярсаччĕ бандероль пĕррехинче.

Хăй мар, Митта Васлейĕ çырса пынă
Кун кĕнеки-мĕн выртнă ăшĕнче.
Ăна кун кăтартнăшăн ыйтса çырнă
Юмарт мана район пичетĕнче.

Тетте-кĕнекелле кăларса ятăм
Поэт ал çырăвне Чăнлă енче.
Тупса курма пулать паян ăна та
Митта кĕнекисен списокĕнче.

Мана та ун чухне ансат пулман —
«Опалăна» лектернĕччĕ ăман.
09.06.09.

71.

Сăввисене пĕлетĕп хам та лайăх.
Ваçлей Давыдов-Анатри поэт
Яш чух мана парсаччĕ туслăн алă,
Курсан кăмăлласа кĕтсе илет.

Чунĕпеле çаплах хитре те çамрăк,
Юрри-сăвви ун – халăх асĕнче.
Ăна шăтса хуплаймĕ çумлă курăк,
Поэт сăвви-юрри вăл – хăй тĕнче.

Килсен-кайсан кĕтсе илет тăванлăн
Пĕччен чухне те хăтлă хваттерте.
Ун умĕнче çук мар-ха манăн парăм
Аякри мар Ульяновск-Чĕмпĕрте.

Тавтапуç, Патăрьел ватти, Сире!
Тăванлăх-туслăх – чи кирли пире!
09.06.09.

72.

*«Тăван ен – Çĕнĕ Йĕлмел» кĕнеке авторне*
*Николай Казакова (Ильмовские)*

«Старик» тесе каланă пулнă ĕлĕк
Алла çитсессĕн вăй питти çыннах.
Яшсем курсан хисеплĕн хывнă çĕлĕк
Ун умĕнче. Ку пулнă-ха чăнах.

«Чăваш ĕçне» эс çамрăклах пуçларăн,
Чи кĕçĕнниччĕ пирĕн хушăра.
Иртет виçеллĕ вăхăт хăвăрт мар-и –
Сана калаççĕ халĕ аллăра.

Çапла, кунсем-çулсем иртеççĕ хăвăрт,
Кирлех-и, шăллăм, куншăн хăрама:
Кая ан юл, вăхăтпала ан ăмăрт, –
Эс вăй хуни каймарĕ харама.

Пуçламăш юбилей кăна вăл аллă,
Çав сăлтавпа сана паратăп алă!
11.06.09.

73.

Хӗвел ҫӳлтен пӑхать ялтӑраса,
Ҫил вӗрнипе ҫуллахи кун та сӑнсӑр.
Самантсерен килетӗн эс аса,
Мана ҫаплах кичем те сивӗ сансӑр.

Аса килет ялан шӑрӑх июль,
Хӑҫан тӑван ене килсе вӑл ҫитӗ?
Ҫанталӑк хӑй те, тен, улшӑннӑ пуль,
Шӑрӑх, уяр куна кӗтетӗп питӗ.

Ача пек юрататӑп эп ӑшша,
Эп сар куна шанатӑп та кӗтетӗп.
Ан вӗртӗр Ҫурҫӗр ҫилӗ ик хушша, –
Ун сиенне эп курнӑ-ха, пӗлетӗп.

Пӗччен, аякра чух, эп сансӑр вӑйсӑр,
Санпа чухне кӑна хастар та чӑрсӑр.
11.06.09.

74.

Атте ман пулнӑ атеист. Ку – паллӑ:
Хӗрес лартма хушман тӑпри ҫине.
Юман юпа, хӑма таткиччӗ палӑк –
Юлташӗсем йӑлт тунӑ хушнине.

Вилме выртсассӑн пысӑкчӗ ун терчӗ.
Куҫҫульпеле хӳхлетчӗ асанне:
– Пӗр юмӑҫ карчӑк тухатса вӗлерчӗ,
Вӑл илчӗ ҫылӑхсӑр Юман чунне.

Юпи ҫӗрсе ӳксен хӗрес ларттарчӗ
Чылай ҫулсем иртсессӗн асанне.
Ҫапла хӑй майлӑ ҫылӑх каҫарттарчӗ,
Аса илсе ун йывӑр кун-ҫулне.

Атте ялти ҫӗн пурнӑҫшӑн кӗрешнӗ,
Ун чух хресчен ҫынни йыша пӗрлешнӗ.
26.06.09.

75.

Те пулнă коммунист, те çук — пĕлместĕп—
Атте, çĕн пурнăç тунăскер ялта?
Çакна кăна эп пач иккĕленместĕп:
Вăл парăннă ĕçне чунтан-вартан.

Вăл хăйшĕн мар ир-каçăн ăшталаннă,
Хĕрӳллĕн тăснă Яковлев ĕçне.
Ăна шкулне тытса пымашкăн шаннă,
Вăл тӳррĕн пурнăçланă тивĕçне.

Вăл пурнăçа, ачасене юратнă,
Кăнттам аскет е карьерист пулман.
Ял халăхне вăл ыйхăран вăратнă,
Çук, никама та вăл усал туман.

Ăсаннă вăтăр çиччĕмĕш çулта...
Тĕрли тĕл пулнă ун чухне ялта.
26.06.09.

76.

Анне аттепеле пĕрле ĕçленĕ,
Пĕр лав туртса тертленнĕ юнашар.
Çĕн ăрăва малашлăха вăл чĕннĕ —
Ыр тĕслĕх кăтартса, сăмахпа мар.

Аннен те çăмăл марччĕ пурнăç терчĕ —
Кăнттаммăн кĕчĕ тапăнса фашист.
Шăллăмпала мана пĕччен ӳстерчĕ
Ялта анне, хĕрарăм коммунист.

Пĕрлехи ĕç те сахал мар тиенчĕ
Çав йывăр çулсенче ĕнси çине.
Вĕçне çитсессĕн лартрĕ вăл та пăнчă
Рейхстаг çине хĕвеллĕ çуркунне.

Вăл хӳтĕлерĕ çĕршыва, пире,
Питех те шел, ир кайрĕ вăл чире.
26.06.09.

77.

Эп ма пăшăрханса аса илетĕп
Паян, аттепеле анне, сире?
Çĕршыв арканасса пĕлмен пĕрре те
Эсир, паллах, ÿстернĕ чух пире.

Каллех мул хуçисем пуç пуласса та,
Хĕн-хур тĕнчи таврăнасса пĕлмен.
Пуррипеле çырлахнă пит ансатăн,
Тивĕçлинчен ытлашшине илмен.

Анне Миттапала пĕрле вĕреннĕ,
Атте – Стихван Шавлипеле пĕрле.
Ир çитĕнсе ĕмĕтпеле хĕмленнĕ
Атте – маттур яш чух, анне – хĕрле.

Тăват енне салатнă самана
Тантăшсене ÿссессĕн ялана.
26.06.09.

78.

Пире пĕлме пÿрмен иккен пĕрне те
Ăçта çитсе ÿксе шăтассине:
Пĕри, таптанă пăрçа евĕр, пĕтĕ,
Тепри ÿкет çемçе ана çине.

Ана çинчи ашкăрса ÿсĕ тулăх,
Хыт çул çине ÿкни пулать тăпра.
Акаканни – асап-хĕн тÿснĕ халăх,
Ăна ялан хисеплесе упра.

Атте-анне шăпи килейнĕ йывăр, –
Çук, эп ÿпкелеместĕп вĕсене.
Вĕсем суйланă çул, пĕлетĕр хăвăр,
Çыхса тăрать паян ĕмĕрсене.

Эпир – пач урăх самана çынни, –
Тен, манăçа юлни паян çĕнни?
26.06.09.

79.

Чăн коммунистчĕ вăл, аннеçĕм ман,
Ял-йышпала пĕрле вăл выçлăх тӳсрĕ.
Тӳр кăмăлпа ĕçе çӳрерĕ, ӳсрĕ,
Унран таса хĕрарăм та пулман.

Ватти-вĕтти çӳретчĕ ун патне
Канаш тавраш е пулăшу ыйтмашкăн,
Хĕрарăмсем çыру вулаттармашкăн
Упăшкинчен хыпар илсен ятне.

Фронта тумтир тавраш ăсатмалла,
Окоп чавмашкăн килнисем пит йышлă,
Килеççĕ беженецсем те... Хăтлă
Хваттер кашнин валли ун тупмалла.

Пуху пухса каламалла сăмах,
Сăмахĕ пултăр фашиста çăмах!
26.06.09.

80.

Сăмах каланă чух улталаман,
Начар хыпарсене пĕлтернĕ уççăн.
Каланă тӳррĕн, хăраса тăман,
Ял-йыш сывланă ирĕккĕн ун хыççăн.

Аван хыпар илсе килсен хаçат
Çерем çине ларса саспа вулатчĕ,
Çынпа пĕрле ача пек савăнатчĕ –
Чун-чĕререн кулать е калаçать.

Элеклемен вăл айăпсăр çынна,
Çавăнпала ăна юратнă халăх,
Хăварчĕ йĕр хăй хыççăн асăнмалăх –
Калас сăмахăм манăн çак кăна.

Калаçнă чух хăйне туятчĕ паттăр
Аннеçĕм ман – хĕрарăм агитатор.
26.06.09.

81.

Тус-тантăш пур ман, кӳршĕ Миккалай,
Вăрçă ачи, ман пекех, лăпкă, ырă.
Пĕрле чупса çӳренĕ пĕрехмай,
Çемçеччĕ чунĕ унăн, куçĕ çырă.

Хĕрĕх пĕрремĕш хĕлччĕ пулмалла,
Шута кайса шăп мăн çын пек каларĕ:
– Пĕлетĕн-и, кĕрес пулсан яла
Таканлă аттипе фашистсен çарĕ...

Тытса каять сан аннӳне малтан,
Унтан сана та Гитлер полицайĕ...
Каларĕ çакă сăмаха чунтан,
Питех те тĕрĕс кӳршĕ Миккалайĕ.

Ара, анне ман пулнă коммунист,
Эп – ун ачи... Каçарĕ-и фашист?!
26.06.09.

82.

Ларатпăр калаçса кĕрекере.
Атте-священник пур, пăртакçă хĕрнĕ.
(Кĕрекере чух вăл та тан, эре).
Сухалĕ кĕреçе пек, пичĕ – хĕрлĕ.

– Хăш самана аван: çĕнни, кивви? –
Ыйтать çакскер, хĕрсе калаçнă майăн.
Сĕтел çинче – пăмитурпа киви,
Ăна-кăна сӳтсе явмашкăн лайăх.

– Мана кивви килĕшерех парать:
Пĕччен кичем, пыра ларать кулачă.
Çĕнни пур: ĕçсĕр, йĕмсĕр хăварать
Ахаль çынна. Ку çак йĕрке пулать-и?!

Атте-священник килĕшет манпа,
Пĕр шутласан, тĕлĕнмелле унпа.
23.06.09.

83.

Сӑмахӑмшӑн мана, тен, пулӗ ҫылӑх?
Ҫавах сакна ҫирӗплетсе калам:
Иисус Христос вӗрентӗвӗ пит ҫывӑх
Коммунистсен вӗрентӗвне, ачам.

Ахальтен мар ман шухӑшӑм пӗр килчӗ
Атте-священник шухӑшӗпелен.
Ӗненмесессӗн ху та аса илччӗ, –
Сӑмахӗсем йӑлт паллӑ авалтан:

Усал ан ту ҫынна, ак ырӑ вӑрлӑх,
Ҫын ан вӗлер тата ан тух вӑрра!
Ҫынсемшӗн тӳс хурапала шурра!
Ун чух кӑна эс ху та курӑн ырлӑх.

Ак пурнӑҫ чӑнлӑхӗ – вула, вӗрен,
Ӑна этемлӗх пӗлнӗ ӗлӗкрен.
26.06.09.

84.

Ман пуп та сывласа илчӗ ассӑн
Пӑртак аса илсессӗн иртнине.
Ӑҫтан юраттарас-ха ҫӗннине
Вӑрҫӑри пек ҫын тӑкӑнать пулсассӑн?

Ҫапла. Ҫӗннин тӳнтерӗ сахал мар,
Анне пек, тӳррипе калас пулсассӑн.
Ӑшра амаланса ҫитет кӑвар,
Татах та ҫирӗпленчӗ манӑн сассӑм.

Ӑна-кӑна курать-ҫке куҫ, илтет хӑлха,
Сенкер экран ҫинче те кӑтартаҫҫӗ:
Хурах пек, ҫаратаҫҫӗ халӑха,
Тискеррӗн пусмӑрлаҫҫӗ, пуҫ касаҫҫӗ.

Хӑрушӑ кӑнтӑрла та курӑнма.
Ара, ҫапла юрать-и пурӑнма?
27.06.09.

85.

Манпа йалт килĕштерчĕ пуп-атте
Тата пĕрер черкке ўпĕнтерсессĕн.
Каларĕ ҫак мана итлерĕ те:
– Юман пичче, тĕрĕс шутлатăн эсĕ.

Черкке тĕпне путса вилет этем,
Тинĕсри пек, ку такама та паллă.
Ҫула тухсассăн ҫул ҫинче пĕтет,
Шăна пек тăкăнать унта та халăх.

Эккей, пĕлес пулать ҫав чиккине.
Чике тăршшĕ лартаканни сахал-и?..
Чарас пулать, паллах, кун пеккине,
Салхун чĕтренчĕ пуп-атте сухалĕ.

Ку тĕрĕс мар-и-ха? Кирлех чарак.
Унпала килĕшĕ такам та ҫак.
27.06.09.

86.

Кассан – турпас-ха, каласан – сăмах,
Тўр калаканĕ тăванне юрамĕ.
Кивви те шар кăтартнă-ха, чăнах,
Паян та сипленсе ҫитмен суранĕ.

Эп ҫав синкерлĕ тапхăра манман,
Тўснисемпе тўсменнисем те манмĕҫ.
Шыранă хамăр хушăрах тăшман,
Пулман пĕр айăпсăррине те канăҫ.

Ўссе ҫитсен ҫав хурлă шăпана
Кĕтмен ҫĕртен эп тўссе куртăм хам та.
«Эс Айхи тусĕ», – терĕҫ те мана –
Сăлтавĕ пулчĕ ман тĕле те янтă.

Кассан турпас, поэт ҫырсан – сонет,
Тепри ăна вулать те тĕлĕнет.
29.06.09.

87.

Анчах мана айăплама ан васкăр:
Киввишĕн çеç хыпса çунать тесе.
Кивви вăл – каснă чĕлĕ, иртнĕ тапхăр,
Сыпаймăн çĕннине çеç тиркесе.

Этемлĕх ача чух ĕненнĕ чăнлăх
Наукăпа тĕпленнĕ хыççăн çеç
Тĕнче çĕнелĕ тепĕр хут ăс-тăнлă,
Тӳпе шайне çĕкленĕ ырă ĕç.

Ун чух, чăнах та, пурте пулĕç танлă,
Чăннипелех те ирĕк тĕнчере.
Этем çуначĕ сарăлĕччĕ анлă,
Юмахри евĕр, тейĕттĕм, эре.

Çĕнни киввипеле пуянлансассăн,
Унран лайăххине çеç туянсассăн.
02.07.09.

88.

*Правда – она всегда опасна.*
(Карен ШАХНАЗАРОВ).
*Тӳр калаканĕ – тăванне юраман.*
(Чăваш халăх сăмахлăхĕ).

Авалтанпах асап-терт тӳснĕ чăнлăх.
Тӳр калаканĕ – хăй тăванĕнчен.
Ултавпала та пурăнмашкăн çылăх –
Кĕтесĕ тĕрлĕ çакă çут тĕнчен.

Пĕри – ултавпала тăвать карьера,
Теприн тури турать çак вирелле.
Çапах ик енĕ те пĕтмест-ха, чĕрĕ,
Тĕлĕнмелле-и ку? Тĕлĕнмелле!

Чăн сăмаха, ай, каламашкăн йывăр,
Хӳтĕлемешкĕн йывăр чăнлăха.
Калаймасассăн, тĕрмери пек, тăвăр,
Хăвна çеç мар, юратнă халăха.

Çавăнпала эп, çамрăк мар Юман,
Вулакансем, Сире улталаман.
22.07.09.

89.

*Ленина давайте не будем трогать.*
(Владимир ВЫСОЦКИЙ)

Хĕрсе кайсан эпир ытла та шух.
Шута илместпĕр пач ăна-кăна.
Кив кирĕке хырса тасатнă чух
Ан тĕкĕнĕр, атьсемĕр, Ленина.

Çак сăмаха каланă тейĕр кам?
Актер Высоцкий, бард, талантлă сăвăç.
Пулман вăл пурнăçра каппайчăк сăвăс,
Вăл пулнă пурнăçпа тан утакан.

Есенин, Маяковский генисем
Çулпуç ĕçне мăнна хурса хакланă.
Паян хак панă чух шута илсем:
Çĕн Пурнăç акине кам сухаланă?

Эс кам пулаттăн вăл пулман пулсан?
Малтан çакна шута илесчĕ сан.
28.07.09.

90.

Вĕçет Çĕр вĕçсĕр-хĕрсĕр уçлăхра.
Анчах пĕрре те ансат мар ун çулĕ:
Аннемĕр-Çĕр ялан хăрушлăхра —
Унта çук мар-çке астероид чулĕ.

Енчен пырса çапма та пултарать
Кĕтмен çĕртен... Çук, юмах мар ку, чимĕр...
Кун пек инкек те пулман мар ара,
Суранĕсем юлайнă кратер евĕр.

Çакна ăсчах хăй курнă пек пĕлет,
Çĕр хуралçи, ырми-канми тĕпчевçĕ.
Хăрушлăхран сыхланмалли меслет
Шырать çакскер, пач çăмăл мар ун ĕçĕ.

Ăс-хакăлĕ этемлĕхĕн виçесĕр —
Паян май çук çакна шута илмесĕр.
28.07.09.

91.

Этем ăс-хакăлĕ, паллах, хăватлă.
Çапах пит мухтанмашкăн кирлĕ мар.
Чи хăватли вăл Çут çанталăк ятлă,
Ун умĕнче пуç каçăртма тăхтар.

Эпир ун пилĕпе тĕнчене килнĕ
Хĕвелпе Уйăх ачисем кăна.
Ыр-сыв чухне кăна çемьеллĕ-киллĕ,
Çак Çĕр çинче эпир кашни – хăна.

Тĕнче уçлăхĕнче татах, тен, пур-тăр
Тунгус метеоричĕ евĕр чул.
Тăрать, тен, çăкăнса татах çав пуртă?!
Этемлĕх килĕ – Çĕр, эс сыхă пул!

Эс – ĕмĕр вĕçевре, тем те пĕр курнă.
Эс пур чухне çеç чечекленĕ Пурнăç!
28.07.09.

92.

Куратăн-и, тĕнче пек пысăк шухăш
Памасть пач канăç вата Юмана.
Анчах çакна пула манран ан ютăш –
Манман сана, хам пек ахаль çынна.

Эп – пĕчĕк çын, шухăшпала çеç Улăп.
Мана çитет сахал та пурнăçра.
Санпа чухне кăна телейлĕ пулăп,
Ăçта кайсассăн та эс ман асра.

Ят-сумлă çынсене эп ăмсанмастăп,
Мĕн пуррипе çырлахăп эп ялан.
Курас килет сана кăна, тунмастăп,
Телейлĕ пуринчен эп санпалан.

Сан сассупа пусăранать ман хуйăх.
Эс – манăн Çĕр çинчи Хĕвел те Уйăх.
28.07.09.

93.

*Д.В.Кузьмина, Чӗмпӗр чӑвашӗсен энциклопедине хатӗрлесе кӑларнӑ усламҫа.*

Вӑхӑтӗнче Ашмарин – ӑслӑ вырӑс –
Чӑваш чӗлхи словарӗн пуххине
Пичетлесе кӑларнӑ. Ҫакӑ ырӑ
Ӗҫе ман халӑх манмӗ ӗмӗрне.

Театра кайсан аса илетӗп
Эп вырӑс Родионов актера.
Чӑн чӑвашла хӑш чух чӑваш ачи те
Ун пек таса калаҫайман ара.

Эс ӳснӗ вырӑс хушшинче. Пупленӗ
Шкулта та, урамра та вырӑсла.
Ҫапах чунпа ялан чӑваш эп тенӗ,
Ҫын хушшинче хӑвна хуман асла.

Вӑй пухрӑн энциклопеди кӑлармалӑх –
Чӑвашсене савса ҫӗклерӗн палӑк.
07.08.09.

94.

Нихҫан та эпӗ урӑх авланаймӑп,
Пыраймӑн эсӗ те мана качча.
Каҫар мана ҫапах, ан туччӗ айӑп,
Эс маншӑн – сарӑ хӗр е хӗрача.

Ара, чунпа ҫаплах эп – ҫамрӑк каччӑ,
Ҫулпа кӑна – шуралнӑ ват Юман.
Асаплӑ шухӑш тарӑн йӗр хӑварчӗ –
Ҫак пурнӑҫра ман курманни юлман.

Ҫапла, ырри те пулнӑ, начарри те,
Хӗн-хур та курнӑ, тӳснӗ эп асап.
Ку тарана ҫитсе пулайнӑ пурте,
Аса илсе калама ҫеҫ ансат.

Паян эп кам? Хӑрах ҫунатлӑ кайӑк.
Ҫапах та ҫакӑншӑн ан ту эс айӑп.
08.08.09.

95.

*Вăта Тимĕрçен чăвашне –*
*Н.Г.Кондрашкин скульптора.*

Сана ятран калаççĕ Тимĕр Кондр,
Чăваш ăсчахĕ, Тимĕрçен ачи.
Эс ӳснĕ аякра, тен, çавăнпа-тăр
Сана тек илĕртет Чăваш тĕнчи.

Тăван уй-хир е юхан шыв çыранĕ –
Асран кайми пейзаж кăна та мар,
Ял-йышăн Аслă вăрçăри суранĕ
Е авалхи легендăри Пăлхар...

Памасть тек канăç улăпсен сăнарĕ
Сана ахальтен мар-мĕн ир те каç, –
Шкул ачисем Рекеевпала мар-и
Сквер хӳттинче ăш-пиллĕн калаçаç.

Татах савăнтаратăн эс пире –
Куннехинче чыс турăн Талвире.
18.08.09.

96.

Хаваслă сăвăсем хайларăм эп вăрах,
Телейпеле юратăва мухтарăм.
Халь реквием çыратăп ытларах:
Малтан ăсанчĕ хĕр, ун хыççăн – арăм.

Ай-хай! хĕр вилĕмĕ пулмарĕ çăмăл, –
Эп хатĕрччĕ хам униăн тертленме.
Çавăнтанпа ялан ман хуçăк кăмăл, –
Ун пек шăпа ан пӳртĕр этеме.

Атте-анне малтан каймашкăн тивĕç
Леш тĕнчене хĕрпе ывăлĕнчен.
Анчах шăпамăр хăйĕннех вăл тăвĕ –
Асапĕ сахал мар ку çут тĕнчен.

Сĕм авалтан пырать йĕрки ун тăтăш:
Этем кун-çулĕ хурлăхпала хутăш.
08.10.09.

97.

*Виталий СТАНЬЯЛА*

«Чăваш ĕçне» эс кӳлĕннĕ ахаль-и
Студент чухнех çунатлă ĕмĕтпе, –
Чăваш аслашшĕ Яковлев халалĕ
Яш-кĕрĕме çĕн шанчăк панипе.

Çĕршыв сана ăсчах таран ӳстерчĕ, –
Тĕпчевçĕ-вĕрентӳçĕ те хăвах
Эс пултăн. Халăхăмăр терчĕ
Ялан памарĕ канăç çав-çавах.

Оратор та, поэт, таврапĕлӳçĕ,
Тулай чăвашĕсен тĕп хӳтлевçи...
Ятна чи аякри ялта пĕлеççĕ,
Эс – тӳре мар, эс – халăхăн тарçи.

Эс – Чĕмпĕр Енĕн кĕтнĕ ыр хăни,
Эп сонетра çырни – йăлтах чăнни.
10.11.09.

98.

Кĕтмен-туман çĕртен çакланчĕ грипп.
Темме çаплах ура çинче çӳрерĕм.
Кĕç вĕрĕлтерчĕ – шала кайрĕ чирĕм,
Кун-çул çиппи – çинçе, черченкĕ çип.

«Пăтпа кĕрет, тухать сулатникпе», –
Тесе калană ваттисем ахаль-и.
Эмел çăтатăп врач каланипе, –
Усси сахал, чаксах пырать вăй-халăм.

Грипп вирусĕ усалланать çуллен,
Йĕпе-сапа çанталăк çитнĕçемĕн.
Шиклентерет ку е вăл эпидеми, –
Яш чух эпир ăна-кăна пĕлмен.

Чир – парне мар. Анчах мĕскер тăвар?
Вăл – пур. Калаçтарать. Эппин, шӳт мар.
10.11.09.

99.

Шаккать чӳречерен. Пăхатăп – Вилĕм!..
Тăрать кĕтсе мана... тупăкĕпе.
Калать:
– Юман! Сана эп илме килтĕм –
Çитет, ачам, кун чӳл пурăннипе.

Мĕскер тăвас? Пурте çĕре çитеймĕн.
Кур: тĕрĕснех калать çак кинеми.
Çĕре çитме те ман инçе юлман-мĕн,
Ик теçетке çеç ытларах, ами!..

– Ку чух эп грипп лексен те ăсататăп.
Илтмен-и Сысна грипĕ тенине?..
Çаплах илет çакскер ман тинкене.
– Юрать. Малтан выртса кăтарт çеç, Ватă...

Эп вилĕме çав каç тухса уçмарăм.
Хăйне... çав тупăк хуппипе хупларăм.
11.11.09.

100.

Çапла кĕç çырăнчĕ татах сонет.
Черечĕпе ку çĕрмĕш пулчĕ манăн.
Куратăр-и, поэзи Вилĕме çĕнет, –
Кашни сонет – çулталăк Ват Юманăн.

Çаплах утатăп мар-и малалла
Яш чух суйласа илнĕ çулпала.
Тумхахсене пултарнă пек сиретĕп.
Телейлĕ çул сунатăп çеç сире те.

Сире, çĕн ĕмĕрти чăвашсене,
Маттур шăллăмсемпе йăмăксене.
Тĕллевлĕ пултăр умри çулăр, такăр,
Уя тухсассăн ырă вăрлăх акăр.

Малтанхисен ĕçне хăварăр упраса,
Йышлатăр. Юлăр чунăрпа таса.
11.11.09.

101.
Эс пуррипе кăна тĕнче илемлĕ,
Эс пуррипе кăна кун-çул хитре.
Эс пуррипе асамлă пурнăç меллĕ, –
Хĕвел шевли çиçсе вылять питре.

Ырри те, усалли те килчĕç курттăм,
Çавах пулмарăм, çук, хĕн-хур айне.
Эс пуррипе кăна телей эп куртăм,
Санпа çеç тупрăм пурнăç тупсăмне.

Кун-çул сулăнкинче нумайччĕ тертĕм,
Аса илсессĕн халь чĕре çунать.
Йывăрлăха санпа пĕрле çĕнтертĕм, –
Эс мар-и пултăн ман хăрах çунат?

Сан умăнта çаплах ман пысăк парăм,
Чун-чĕререн юратакан хĕрарăм!
29.05.10.

Анатолий Юман

**Ватӑ Юман шухӑшӗ**

На чувашском языке

В авторской редакции
Компьютерная верстка *В.А. Ефимовой*

Подписано в печать 17.08.2010. Формат 60х84/16.
Бумага офсетная. Гарнитура Таймс. Печать офсетная.
Уч.-изд. л. 1,6. Тираж 100. Заказ № 34.

Отпечатано с готовых диапозитивов заказчика
в типографии Чувашского государственного института
гуманитарных наук
428015, г. Чебоксары, Московский пр., д. 29, корп. 1

45.00

